2022-2023-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
10 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 120 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайййи 50 балл пухма пулать

1. «Эпĕ алă усса лармарăм. Эпĕ аслă Раççей мухтавĕ ӳссе пытăр çĕршыв чапĕ тата çӳлерех çĕклентĕр тесе ĕçлерĕм». Çак йĕркесен авторне тĕрĕс палăртăр. Пĕрремĕш клеткăна автор хушамачĕн малтанхи сас паллине çырăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.*

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|

2. *Изобильный край, чувство неуверенности, привлекательная вещь* – сăмах майлашăвĕсене чăвашла куçарăр. Ăнлантаракан сăмахăн малтанхи сас паллине иккĕмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.*

3 _________ Чĕмпĕре çитерет. Сиксе юлнă сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр, пĕрремĕш сас паллине виççĕмĕш клеткăна çырса хурăр. Фразеологизм пĕлтерĕшне ăнлантарăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

*4. Лару, пăру, пуху, сасăлу* сăмахсене пару падежĕнче вĕçлĕр. Улшăнакан сас паллине тăваттăмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

5. 1-мĕш ыйтура панă йĕркесенче хăш сăмах хыççăн чарăну палли сиктерсе хăварнă? Сăмахăн юлашки сас паллине пиллĕкмĕш клеткăна çырăр. Чарăну палли лартнин сăлтавне ăнлантарăр. *Сăмахне тĕрĕс тупнăшăн -3 балл, ăнлантарнăшăн- 2 балл. Пĕтĕмпе - 5 балл.*

6. И.Я.Яковлевпа пĕр ялта çуралнă тата унăн пĕрремĕш вĕренекенĕсенчен пĕри пулнă çын кам вăл? Мĕн ятлă ялта çуралнă вĕсем? Ăçта вырнаçнă вăл? Паллă çыравçăн хушамачĕн пĕрремĕш сас паллине улттăмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.*

7. Ефрем Еллиевăн мĕнле тилхепе çинчен çырнă хайлавĕ пур? Сăмахăн юлашки сас паллине çиччĕмĕш клеткăна çырса хурăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.*

8. Мĕн вăл такмак? *Тĕрĕс хуравшăн – 3 балл.*

9. Çыравçăсен хайлавĕсене тĕрĕс шыраса тупăр. *Тĕрĕс хуравшăн – 8 балл.*

1.Авторсем: Валерий Туркай, Константин Иванов, Федор Павлов, Тайăр Тимкки

2.Хайлав ячĕсем: «Ялта», «Тĕлĕнмелле», «Айăп», «Икĕ хĕр».

10. Хăвăр таврашра тухса тăракан чăвашла хаçат çинчен çырса парăр. Хаçат корреспонденчĕ пулнă пулсан эсир мĕнле темăпа ытларах çырнă пулăттăр? *Тулли хуравшăн - 5 балл.*